27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 МАРТ 21 ЮНКУН 54(1805) №

# Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

## ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

*Белоруссири 3-мĕш фронт çарĕсен командующине*
***Совет Союзĕн Маршалне ВАСИЛЕВСКИЕ***
*Фронт штабĕн начальникне*
***Генерал-полковника ПОКРОВСКИЕ***

**БЕЛОРУССИРИ** 3-мĕш фронт çарĕсем, нимĕçсен Хĕвелтухăç Пруссири группировкине пĕтерсе тăкассишĕн çапăçса пырса, паян, мартăн 20-мĕшĕнче, **БРАУНСБЕРГ** хулине—нимĕçсен **ФРИШ ГАФ** заливĕн çыранĕнчи оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пунктне туртса илнĕ.

**БРАУНСБЕРГ** хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче çаксем чапа тухнă: **ГУСЕВ** генерал-лейтенантăн, **ГОРБАТОВ** генерал-полковникăн, **ГЛЕБОВ** генерал-лейтенантăн, **ИВАШЕЧКИН** генерал-лейтенантăн, **ФОКАНОВ** генерал-лейтенантăн, **ГАРЦЕВ** генерал-майорăн, **УРБАНОВИЧ** генерал-лейтенантăн, **НИКИТИН** генерал-майорăн, **КУЗНЕЦОВ** генерал-лейтенантăн, **БУЛАТОВ** генерал-майорăн, **ОПЯКИН** генерал-майорăн, **КОНОВАЛОВ** генерал-майорăн, **МИХАЛИЦИН** генерал-майорăн, **ВЕРЕВКИН** генерал-майорăн, **ПОГРЕБНЯК** полковникăн, **ПАШКОВ** полковникăн, **ГРИГОРЬЯН** полковникăн, **ГРЕБНЕВ** полковникăн, **ГРЕКОВ** полковникăн, **ВЯЗНИКОВЦЕВ** полковникăн, **АБИЛОВ** полковникăн, **ТЕЛКОВ** полковникăн, **КРИВЕНЦОВ** полковникăн, **РОМАНЕНКО** полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн **ТИМ[illegible]ИЕВИЧĂН**, артиллери генерал-майорĕн **ВЛАДИМИРОВĂН**, артиллери генерал-майорĕн **КОРОЧКИНĂН**, артиллери генерал-майорĕн **ГАНЖЕН**, **ДЕРГАЧ** полковникăн, **КАНДИДАТОВ** полковникăн, **МЕРЛИН** полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн **НОСОВĂН**, танковăй çарсен генерал-майорĕн **САХНОН**, **ОПАРИН** полковникăн, **ГРИШИН** полковникăн, **КОЗИКОВ** полковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн **ХРЮКИНĂН**, авиаци генерал-майорĕн **ШЕВЧЕНКĂН**, авиаци генерал-майорĕн **НЕЧИПОРЕНКĂН**, **ХАТМИНСКИЙ** полковникăн, **ЧУЧЕВ** полковникăн, **САЖНЕВ** подполковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн **ЖИЛИНĂН**, **ИСУПОВ** полковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн **МАМОТКĂН**, çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн **МИШИНĂН** связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве ялан лăха палăртса хăварас тесе, **БРАУНСБЕРГ** хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, мартăн 20-мĕшĕнче, 21 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици **МУСКАВ**, çĕрçирĕм тăвата тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, Белоруссири 3-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, **БРАУНСБЕРГ** хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, **БРАУНСБЕРГ** хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн **ТАВ ТАВАТАП**.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

*Верховный Главнокомандующи*
***Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.***

1945 çулхи мартăн 20-мĕшĕ. № 303.

## ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

*Белоруссири 1-мĕш фронт çарĕсен командующине*
***Совет Союзĕн Маршалне ЖУКОВА***
*Фронт штабĕн начальникне*
***Генерал-полковника МАЛИНИНА***

**БЕЛОРУССИРИ** 1-мĕш фронт çарĕсем, пысăк çапăçусем хыççăн, паян, мартăн 20-мĕшĕнче, **АЛЬТДАММ** хулине туртса илнĕ те нимĕçсен **ОДЕР** шывĕн сылтăм çыранĕнчи, **ШТЕТТИНРАН** хĕвелтухăçнерехри вăйлă çирĕплетнĕ плацдармне пĕтернĕ.

**АЛЬТДАММ** хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче çаксем чапа тухнă: **БЕЛОВ** генерал-полковникăн, **ПЕРХОРОВИЧ** генерал-лейтенантăн, **ПУЛКО-ДМИТРИЕВ** генерал-лейтенантăн, **ЛУКЬЯНЧЕНКО** генерал-лейтенантăн, **ХАЛЮЗИН** генерал-лейтенантăн, **СИЯЗОВ** генерал-майорăн, **ВЕРЖБИЦКИЙ** генерал-майорăн, **ПОЗНЯК** генерал-майорăн, **АНДРЕЕВ** генерал-майорăн, **МАЛЬКОВ** полковникăн, **ГОРИШНИЙ** генерал-майорăн, **АНДОНЬЕВ** полковникăн, **ВЛАДИМИРОВ** генерал-майорăн, **МОШАЛКОВ** полковникăн, **СЕЛЮКОВ** полковникăн, **СЕРЕГИН** полковникăн, **МАКАРОВ** генерал-майорăн, **МАСЛОВ** полковникăн, **ГОРШЕНИН** полковникăн, **МУЗЫКИН** полковникăн, **ПАВЛОВСКИЙ** полковникăн, **ЧЕРНОВ** генерал-майорăн, **ГЕРВАСИЕВ** полковникăн, **ВЫДРИГАН** полковникăн, **ЗАИКИН** генерал-майорăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн **КАЗАКОВĂН**, артиллери генерал-майорĕн **ЕГОРОВĂН**, артиллери генерал-лейтенанчĕн **ГОДИНĂН**, артиллери генерал-майорĕн **ПЛАСКОВĂН**, артиллери генерал-лейтенанчĕн **ИГНАТОВĂН**, артиллери генерал-майорĕн **РОЖАНОВИЧĂН**, **ЗЕРИОВ** полковникăн, артиллери генерал-майорĕн **ЗРАЖЕВСКИН**, артиллери генерал-майорĕн **СНЕГУРОВĂН**, **ФАНТАЛОВ** полковникăн, артиллери генерал-майорĕн **НЕСТЕРОВИЧĂН**, **ЗНАЧЕНКО** полковникăн, **ЕФРЕМЕНКО** полковникăн, **ПОНОМАРЕНКО** полковникăн, **ЖИГАРЕВ** полковникăн, **НЕБОЖЕНКО** полковникăн, **ГРЕХОВ** полковникăн, **КОПЕЛЕВ** полковникăн, артиллери генерал-майорĕн **БОГДАШЕВСКИН**, артиллери генерал-майорĕн **ЛЯРСКИН**, **КОЛОКОЛОВ** полковникăн, **КАРПАЧЕВ** полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-полковникĕн **БОГДАНОВĂН**, **РАДЗИЕВСКИЙ** генерал-лейтенантăн, танковăй çарсен генерал-майорĕн **ИВАНОВĂН**, танковăй çарсен генерал-майорĕн **КРЕТОВĂН**, танковăй çарсен генерал-майорĕн **ТЕЛЯКОВĂН**, танковăй çарсен генерал-майорĕн **ВЕДЕНЕЕВĂН**, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн **КРИВОШЕИНĂН**, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн **КИРИЧЕНКĂН**, **АБРАМОВ** полковникăн, **ОХМАН** полковникăн, **МАКАРОВ** подполковникăн, **КОПЫЛОВ** полковникăн, **ФЕДОРОВ** полковникăн, **ПОТАПОВ** полковникăн, **ШАМАРДИН** полковникăн, **ЕРШОВ** полковникăн, **БАБАЯН** генерал-майорăн, **ВАЙНРУБ** подполковникăн, **КУЗНЕЦОВ** полковникăн, **СЕКУНД** подполковникăн, **БАРАНЮК** полковникăн, **ШЕМЯКИН** полковникăн, **ЕРЕМЕЕВ** полковникăн, **МИТРОШЕНКО** полковникăн, **БУГАЕНКО** майорăн, **ШАРГОРОДСКИЙ** подполковникăн, **КАРАЩУК** подполковникăн, **РУМЯНЦЕВ** подполковникăн, **БЕЛОБОРОДОВ** подполковникăн, **МОХРЯКОВ** полковникăн, **КОРОСТИЙ** подполковникăн, **БАКЛУШИН** подполковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-майорĕн **ТАТАНАШВИЛИН**, **ДАЛИДЗЕ** полковникăн, **НАКОНЕЧНИКОВ** подполковникăн, **ИСАЕВ** полковникăн, **КАРЯГИН** полковникăн, **ОРЛОВ** полковникăн, **РАССКАЗОВ** полковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн **КОМАРОВĂН**, **КОВАЛЕВ** подполковникăн, инженери çарĕсен генерал-майорĕн **ИОФФЕН**, **ВАНЯКИН** подполковникăн, **КИСЕЛЕВ** полковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн **ЛИТВИНЕНКĂН**, **СОЛОВЬЕВ** полковникăн, **СМОЛИН** полковникăн, **МАСЛОВ** подполковникăн, **БЕЛЕНКО** полковникăн, **МЯГКОВ** подполковникăн, **ХОТЬКО** майорăн, **КОРСУН** майорăн связисчĕсем.

Тунă çĕнтерĕве ялан лăха палăртса хăварас тесе, **АЛЬТДАММ** хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, мартăн 20-мĕшĕнче, 22 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици **МУСКАВ**, çĕрçирĕм тăвата тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, Белоруссири 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, **АЛЬТДАММ** хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, **АЛЬТДАММ** хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн **ТАВ ТАВАТАП**.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

*Верховный Главнокомандующи*
***Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.***

1945 çулхи мартăн 20-мĕшĕ. № 304.

## Совет Информаци Бюровĕнчен

### МАРТĂН 19-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Мартăн 19-мĕшĕнче пирĕн çарсем **КЕНИГСБЕРГ** хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре нимĕç çарĕсен Хĕвелтухăç Пруссири группировкине пĕтерсе тăкасшăн йăнăçлăн çапăçнă, **ФРИШ ГАФ** заливĕ хĕрри патнелле куçса пырса, халăх пурăнакан 30 пунктпа ытла йышăннă, вăл шутра — **ШЕЛЕН, ВИНДКАЙМ, ПОТТЛИТЕН, КИРШАЙТЕН, ШРАЙНЕН, КВИЛИТТЕН, НОЙВАЛЬД, ФРАЙХУФЕН, ГАЛЛИНГЕН, ГРЮНВЕЛЬДЕ, ВАЛЬТЕРСДОРФ, БИРКЕНАУ, НОЙБАНАУ, ПАГЕНДОРФ, ШИЛЛГЕНЕН, КЛАЙН АМТСМЮЛЕ, ЗАГЕРН, МАРИЕНФЕЛЬДЕ, ВИЛЛЕНБЕРГ, ШТАНГЕНДОРФ, КАРЛЬБЕРХАУ** ятлă пысăк ялсем. Мартăн 18-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн çарсем **КУ** районра 2.138 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ тата çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: танксемпе хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсем—47, тупăсем—236, минометсем—57, пулеметсем—350, автомашинăсем—530, паровозсем—59, чугун çул вагонĕсем—550, çар пурлăхĕн склачĕсем—50.

Тĕрĕслесе тухнă тăрăх, **КОЛЬБЕРГ** хулишĕн çапăçнă чухне **БЕЛОРУССИРИ** 1-мĕш фронт çарĕсем 6.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ тата çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: танксемпе хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсем—40, тупăсем—100, чугун çул эшелонĕсем—22, паровозсем — 48, çар пурлăхĕн склачĕсем — 15. Тăшманăн, вилнисене кăна шута илсен те, 8.000 салтакпа офицера яхăн пĕтнĕ.

**БРЕСЛАУ** районĕнче пирĕн çарсем тăшманăн хулара хупăрласа илнĕ группировкине пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă тата разведчиксем шыраса çÿренĕ.

Мартăн 18-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 126 танкĕне хăй тĕллĕн çÿрекен туппине çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 117 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

### ПИРĔН АВИАЦИ ДАНЦИГ ХУЛИНЕ ПЫРСА ТАПАННИ

Мартăн 19-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн йывăр бомбардировщиксем нимĕçсен Данциг хулинчи çар промышленность объекчĕсене пырса çапнă. Бомбăсем пăрахнине пула, Данциг портĕнче вăйлă пушарсем тухнă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

☆ ☆

Кенигсберг хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманăн Хĕвелтухăç Пруссири группировкине пĕтерсе тăкасшăн йăнăçлăн çапăçнă. Нимĕçсем вăйлăн персе хирĕç тăраççĕ, пурпĕрех пĕтмелле çынсем пек, хаяррăн контратакăсем тăваççĕ. Пирĕн çарсем хупăрласа илнĕ унка хĕвелтухăç енчен, кăнтăр енчен тата хĕвеланăç енчен хĕстерсе пыраççĕ, тăшмана вĕçĕмсĕр пыра-пыра çапаççĕ. Фриш Гаф заливĕ хĕррипе наступлени туса пыракан гварди чăсĕсем нимĕçсене тĕреклетнĕ пункт пулса тăракан Шелен ялĕнчен сирпĕтсе кăларнă. Çĕрле атакăласа, Виндкайм ялне туртса илнĕ. Çирĕплетнĕ пункт пулса тăракан Грюнвельде ялĕшĕн хаяр çапăçу пулса иртнĕ. Ку ял темиçе хутчен те алăран алла куçнă, юлашкинчен ăна пирĕн подразделенисем йышăннă. Тĕреклетнĕ пункт пулса тăракан Вальтерсдорф ялĕнчи тăшман гарнизонне совет чăсĕсем хупăрласа илнĕ те пĕтерсе тăкнă. Браунсберг хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн пехота, артиллери пулăшса тăнипе, нимĕçсен Бауде шывĕн хĕвелтухăç хĕрринчи вăйлă çирĕплетнĕ позицийĕсене атакăланă. Тăшман персе тăнине пăхмасăрах, совет боецĕсем Бауде шывĕ урлă каçнă та тĕреклетнĕ пунктсем пулса тăракан Вилленберг, Мариенфельде (Браунсберг хулинчен икĕ километр кăнтăртарахра) тата Штангендорф ялĕсене туртса илнĕ. Кун каçиччен пулса иртнĕ çапăçусенче тăшманăн темиçе пин салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

Совет бомбардировщикĕсем тата штурмовиксемпе истребительсем нимĕçсен тĕреклетнĕ пункчĕсене тата персе тăмалли позицийĕсене пыра-пыра çапнă, çавăн пекех тата Фриш Гаф заливĕнчи пристаньсемпе причалсем çине бомбăсем пыра-пыра пăрахнă. Нимĕç çарĕсем йышăнса тăракан территори çинче пушарсен тĕтĕмĕ явăнса тăрать. Сывлăшри çапăçусенче пирĕн летчиксем кун каçиччен тăшманăн 29 самолетне персе ÿкернĕ.

Хĕвелтухăç Пруссире совет воинĕсем хастаррăн та паттăррăн çапăçаççĕ. Сережников капитанăн подразделенийĕсем тăшмантан аякран иртсе кайнă та нимĕçсен оборонин тĕреклетнĕ пунктне хыçалтан атакăланă. Тăшман гарнизонне аркатса тăкнă, вара нимĕçсем ним йĕрки-паллисĕр каялла чакнă, хăйсен миномечĕсемпе мина складне çаплипех пăрахса хăварнă. Пирĕн боецсем тăшмантан тытса илнĕ хĕçпăшалпа нимĕçсене хăйсене пеме тытăннă, 1.000 мина ытла персе янă. Поединцев капитан, Саленов старши сержант тата Пущенкăпа Закладный рядовойсем нимĕçсем хытă персе тăнă çурта вăркăнса кĕрсе кайнă. Паттăр воинсем, гранатăсем вăркăнтарса, 10 гитлеровеца вĕлернĕ, çав çуртри ытти 23 нимĕç салтакĕ тыткăна парăннă.

Петелис красноармеец тăшманăн вăрттăн çĕртен перекен пулеметне асăрханă. Петелис юлташ тăшман пулемечĕ патне систермесĕр пырса тухнă та нимĕç пулеметчикĕсене тыткăна илнĕ.

* * *

Белоруссири 2-мĕш фронт авиацийĕ тăшманăн Данциг районĕнчи аэродромне пырса тапăннă. Совет летчикĕсем, бомбăсем пăраха-пăраха штурмласа, нимĕçсен 17 самолетне пĕтерсе тăкнă тата 12 самолетне сиенленĕ. Аэродромра пушарсем тухнă, пушарсенче темиçе тĕлте вăйлă взрывсем пулнă.

* * *

Бреслау хулинче пирĕн çарсем хупăрласа илнĕ тăшман гарнизонне пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Хăйсен çулĕ çинчи тĕрлĕ япала пăрахса тунă купасене, баррикадăсене тата минăсем хурса тунă чăрмавсене çĕнтерсе-çĕнтерсе, советсен штурмлакан ушкăнĕсем утăм хыççăн утăм малалла куçса пыраççĕ. Енер «Фамс Юнкерс» фирмин автомобильсем тăвакан пысăк завод районĕнче вăйлă çапăçусем пулса иртнĕ. Пирĕн подразделенисем нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та çав заводăн кăнтăр-хĕвеланăç пайне йышăннă. Гинденбург площадĕнчен çурçĕртерехре совет пехотинецĕсем тăшманăн 5 контратакине сирсе янă. Кунти çапăçура темиçе хутчен те алă вĕççĕн тытăçса илнĕ. Вара совет пехотинецĕсем тăшманăн хирĕç тăмалли 4 узелне тытса илнĕ. Пирĕн ытти чаçсем тĕп тавар станцийĕпе чугун çул мастерскойĕсем патне пымалли вырăнсенче çапăçаççĕ.

Пĕр урамра нимĕçсен пехоти контратакăна кĕрсе кайнă. Пархоменко старшина нимĕçсене хăй патне çывăхах янă та станковăй пулеметпа пеме тытăннă. Нимĕçсен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă, ыттисем çĕр çумне лапчăнса выртнă. Çавсене пулăшма тăшман хăйĕн хăй тĕллĕн çÿрекен туппине янă. Пархоменко танксене пемелли гранатăна çав тери ăнăçлăн вăркăнтарнă та тупă гусеницине аркатса тăкнă. Пархоменко старшина çавăнтах каллех пулеметпа пеме тытăннă, вăл темиçе вунă нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Кадыровпа Соколов саперсем нимĕçсен тĕреклетнĕ пĕр пысăк чул çуртне сиктерсе янă. Ишĕлсе аннă çурт айĕнче нумай гитлеровец пĕтнĕ.

Тăшман хăйĕн Бреслау хулинче хупăрласа илнĕ гарнизонĕ валли çар хатĕрĕсем транспорт самолечĕсемпе илсе пыма хăтланать. Пĕр каç хушшинче кăна пирĕн летчиксемпе зенитчиксем нимĕçсен 7 транспорт самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн карапĕсем Балтика тинĕсĕнче нимĕçсен пĕтĕмĕшпе 21.000 тонна таякан 4 судние шыва путарнă.

## *Ялсенчи художествăллă пултарулăхăн республикăри смотрĕ*

Смотрăн тăваттăмĕш кунĕнче Куславкка тата Çĕмĕрле районĕсенчи коллективсем хăйсен пултарулăхне кăтартса пачĕç.

Куславкка районĕнчи хор, чăваш ансамблĕн артисчи Алтын-Баш организациленĕскер, чăвашсемпе вырăссен темиçе юррине килĕшÿллĕ юрласа пачĕ. Майоров колхозник, унăн арăмĕ тата виçĕ хĕрĕ пĕрле кăтартнă номерсене те куракансем кăмăллаçĕç. Федорова юлташ сăвăсем лайăх вуласа пачĕ.

Çĕмĕрле районĕнчи «Хĕрлĕ Октябрь» колхозăн художествăллă пултарулăх коллективĕ, Магуськин колхозник ертсе пынипе, хаваслăн та ирĕклĕн юрласа тата ташласа кăтартрĕ. Çак колхозри 70 çулхи старик Ильин хăй хывнă юрăсене юрласа пачĕ.

* * *

Çĕмĕрле комбинатĕнчи художествăллă пултарулăх коллективĕ, О. П. Дальская юлташ ертсе пынипе нумай çулсем хушши ĕçлекенскер, тĕрлĕ номерсем кăтартрĕ. Вăл юрласа, ташласа, сăвăсем каласа, художествăллă произведенисем вуласа панине тата ытти номерсем кăтартнине куракансем питех те кăмăлласа йышăнчĕç. Уйрăмах Рубцова, Тополева, Сидошенко, Калганова, Кречнер, Окрестина юлташсен пултарулăхне палăртмалла. Храмов юлташ хăй художествăллă коллективăн пултарулăх руководителĕ пулнине кăна мар, музыка лайăх калама пĕлнине те кăтартрĕ.

Смотр комиссийĕ Дальскаяпа Храмов юлташсен ĕçне уйрăмăн палăртма йышăнчĕ.

## СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин Чехословаки республикин Президентне Эд. Бенеш господина йышăнни

Мартăн 19-мĕшĕнче Кремльте СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин Чехословаки республикин Президентне Эд. Бенеш господина йышăннă.

Йышăнура СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн Пĕррремĕш Заместителĕ Н. М. Шверник, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский тата Чехословакин Совет Союзĕнчи Посолĕ Зд. Фирлингер господин пулнă.

## В. М. Молотов Чехословаки республикин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрне Масарик господина йышăнни

Мартăн 19-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов Чехословакин Ют Çĕршыв Ĕçĕсен Министрне Я. Масарик господина йышăннă.

Йышăнура Чехословакин Совет Союзĕнчи Посолĕ Зд. Фирлингер господин пулнă.

## И. В. Сталин Эд. Бенеш господинпа тата Я. Шрамек господинпа калаçни

Мартăн 19-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин Чехословаки республикин Президенчĕпе Эд. Бенеш господинпа тата Чехословаки республикин Премьер-Министрĕпе Я. Шрамек господинпа калаçнă.

Калаçура СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов тата Чехословаки республикин Совет Союзĕнчи Посолĕ Зд. Фирлингер господин пулнă.

## И. В. Сталин Ж. Катру господина йышăнни

Мартăн 19-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин Франци республикин Посолне Ж. Катру господина йышăннă.

Йышăнура СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов пулнă.

## ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче

Ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçсен планне тултарассишĕн тата натуроплата тÿлемелли обязательствăсене пурнăçлассишĕн машинно-тракторнăй станцисем хушшинче пынă Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене 1944 çулхи результатсем тăрăх пăхса тухса, ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ ăмăртура Чăваш республикинчи **Вăрнар МТС-ĕ** (директорĕ Никонов юлташ) мала тухнă тесе йышăннă, ăна **СССР Наркомземĕн** куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне тата укçан премине памалла тунă.

## ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе ССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче

ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, колхоз çамрăкĕсен звенисем хушшинчи Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн 1944 çулхи итогĕсене пăхса тухса, çапла йышăннă:

Чăваш АССР-ĕнчи Красноармейски районри **«Красный Борденер» колхозри çамрăксен бригадине** (бригадирĕ **Р. П. Петрова** юлташ) ВЛКСМ Центральный Комитечĕн **Хисеплĕ грамотине,** тата СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн **иккĕмĕш премине—7.000** тенкĕ памалла тунă;

Чăваш АССР-ĕнчи Вăрнар районĕнчи **Сталин ячĕпе тăракан колхозри çамрăксен звенине** (звеньевой **В. М. Миронова** юлташ) СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн **виççĕмĕш премине 5.000** тенкĕ памалла тунă;

Ăмăртура пĕрремĕш, иккĕмĕш тата виççĕмĕш вырăн йышăннă звеносен руководителĕсене вĕсен ячĕсене çырнă сехетсем парса наградăланă;

Çамрăксен звенисен социализмлă ăмăртăвне лайăх ертсе пынăшăн Чăваш АССР-ĕнчи **ВЛКСМ Вăрнар райкомне** (секретарĕ **Давыдова** юлташ) тата Чăваш АССР-ĕнчи Красноармейски районри **«Красный Борденер» колхозри комсомолăн пуçламĕш организацине** (секретарĕ **Викторова** юлташ) ВЛКСМ Центральный Комитечĕн **Хисеплĕ грамотине** парса наградăланă;

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн Хисеплĕ грамотине илнĕ комсомол райкомĕсем 3.000 тенкĕ премни, пуçламĕш организацисем хаклă парнесем илеççĕ.

Чăваш республикинчи колхозсенчи çамрăксен звенисене ертсе пыракансене СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн **«Отличник социалистического сельского хозяйства»** значекне тата паха парнесем парса наградăланă.

Наградăланисем хушшинче çак юлташсем пур: **П. Г. Тереков** (Вăрнар районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз), **М. А. Андреев** (Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхоз), **Ф. Т. Наумов** (Чкаловски районри Молотов ячĕпе тăракан колхоз), **В. Г. Якушева** (Чкаловски районри «Красный Октябрь» колхоз), **Н. И. Кудрявцев** (Вăрнар районĕнчи «Самолет» колхоз), **А. С. Семенов** (Вăрнар районĕнчи «Малый Цивиль» колхоз), **Д. Ф. Федорова** (Шăхасан районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз), **М. И. Иванова,** (Красноармейски районри «Красная звезда» колхоз), **О. Т. Трофимова** тата **А. Е. Егорова** юлташсем (Красноармейски районри «Красный Борденер» колхоз).

ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ колхозри комсомолецсемпе çамрăксене вăйлă тырпулшĕн пыракан социализмлă ăмăртăва анлăнрах сарса яма, 1945 çулхи çуракине хатĕрленес енĕпе тимлĕнрех ĕçлеме чĕннĕ.

* * *

ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, çамрăк трактористсемпе трактористкăсен тата çамрăксен трактор бригадисен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи итогĕсене пăхса тухса, çапла йышăннă:

Чăваш АССР-ĕнчи Елчĕк МТС-ĕнчи **Г. Н. Струнков** тата Вăрмар МТС-ĕнчи **В. Л. Лукин** юлташсем ертсе пыракан çамрăксен трактор бригадисене ВЛКСМ Центральный Комитечĕн Хисеплĕ грамотисене тата хаклă парнесем парса наградăламалла тунă;

Социализмлă ăмăртăва лайăх организациленĕшĕн Чăваш республикинчи Шăхасан **МТС-ĕнчи комсомол организацине** (секретарĕ **Николаева** юлташ) ВЛКСМ Центральный Комитечĕн Хисеплĕ грамотине парса наградăламалла тунă;

СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн **«МТС-ри трактор бригадин паллă бригадирĕ»** ятлă значекĕпе çак юлташсене наградăланă: **И. П. Кириллова** (Тăвай МТС), **С. П. Прокопьева** (Комсомольски МТС), **К. П. Антонова** (Куславкка МТС-ĕ), **М. А. Андреева** (Калинино МТС-ĕ), **Н. Т. Тимофеева** (Шăхасан МТС-ĕ), **А. Т. Скворцова** (Куславкка МТС-ĕ), **Г. Н. Стрункова** (Елчĕк МТС-ĕ), **В. Л. Лукина** (Вăрмар МТС-ĕ).

СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн **«МТС-ри чи лайăх тракторист»** ятлă значекĕпе тата хаклă парнесемпе çак çамрăк трактористсене наградăланă: **Г. А. Ахматуллина** (Элĕк МТС-ĕ), **А. С. Семеновăна** (Калинино МТС-ĕ), **А. А. Иванова,** (Куславкка МТС-ĕ), **Т. И. Ильинана** (Вăрнар МТС-ĕ), **Н. А. Соловьевăна** (Комсомольски МТС);

СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн **«МТС-ри чи лайăх тракторист»** ятлă значекĕпе çак çамрăк трактористсене наградăланă:

**М. Б. Паторовăна** (Вăрмар МТС-ĕ), **Е. М. Глуховăна** (Пăрачкав МТС-ĕ), **Г. А. Александрова** (Куславкка МТС-ĕ), **О. Е. Гуськовăна** (Сĕнтĕр МТС-ĕ), **М. В. Толстовăна** (Ишлей МТС-ĕ), **И. Р. Романова** (Шăхасан МТС-ĕ).

### ÇĔПĔРТИ ЧИ ВАТА АРТИЛЛЕРИ УЧИЛИЩИ 25 ÇУЛ ТУЛТАРНИ

Томск хулинчи организацисем Çĕпĕрти чи ватă артиллери шкулĕ—Томскри пĕррремĕш артиллери училищи—25 çул тултарнине уявлаççĕ.

Çав училищĕрен совет артиллерисчĕсен питĕ чаплă ушкăнĕ вĕренсе тухнă.

Оборона Халăх Комиссарĕ Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ училищĕн офицерĕсене, сержанчĕсене, курсанчĕсене тата хăйсен ирĕкĕпе ĕçлекен составне училище 25 çул тултарнă ятпа тата правительство наградисене илнипе саламланă. Хĕрлĕ Çар валли пысăк квалификациллĕ офицерсем хатĕрлес ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тума сунна.

Училищĕре вĕренсе тухнă çынсем фронтран саламлă çырусем нумай янă.

(ТАСС).

## ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

### Нумай ачаллă амăшĕсене „Ача амăшĕн мухтавĕ" ятлă орденпа тата „Ача амăшĕсен медалĕ" ятлă медальпе наградăласси çинчен

СССР Верховный Совет Президиумĕн 1944 çулхи августăн 18-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, СССР Верховный Совет Президиумĕ ячĕпе çаксене наградăлас:

**ШУПАШКАР РАЙОНĔ ТĂРĂХ**

**Çиччĕ ача çуратса пăхса ÿстернĕ амăшĕсене**

**«АЧА АМĂШĔН МУХТАВĔ» ЯТЛĂ III-МĔШ СТЕПЕНЬ ОРДЕНПА**

1. Серафима Ивановна Ивановăна—Апаш ял Советĕнчи «Урожай» колхозри колхозницăна.
2. Анисия Павловна Сергеевăна—Апаш ял Советĕнчи «Урожай» колхозри колхозницăна.
3. Екатерина Федоровна Федоровăна — Апаш ял Советĕнчи «Урожай» колхозри колхозницăна.

**Улттă ача çуратса пăхса ÿстернĕ амăшĕсене**

**«АЧА АМĂШĔСЕН МЕДАЛĔ» ЯТЛĂ I-МĔШ СТЕПЕНЬ МЕДАЛЬПЕ**

1. Агриппина Павловна Антоновăна — Кÿкеç ял Советĕнчи «Трактор» колхозри колхозницăна.
2. Александра Васильевна Васильевăна —Кÿкеç ял Советĕнчи «Трактор» колхозри колхозницăна.
3. Христина Давыдовна Давыдовăна — Кÿкеç ял Советĕнчи «Трактор» колхозри колхозницăна.
4. Васса Федоровна Самаринăна—Кÿкеç ял Советĕнчи «Трактор» колхозри колхозницăна.

**Пиллĕк ача çуратса пăхса ÿстернĕ амăшĕсене**

**«АЧА АМĂШĔСЕН МЕДАЛĔ» ЯТЛĂ II-МĔШ СТЕПЕНЬ МЕДАЛЬПЕ**

1. Анна Евсеевна Горюновăна—Кÿкеç ялĕнчи килхуçи хĕрарăмне.
2. Ксения Павловна Павловăна—Шемшер ял Советĕнчи «1-ое мая» колхозри колхозницăна.

*(Юлашки пулать)*

### 1944—45 ÇУЛХИ КĔРКУННЕПЕ ХĔЛЛЕХИ ВĂХĂТРА ВĂРМАН ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА МĔН ЧУХЛЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

**СВОДКА**
(Мартăн 16-мĕшĕ тĕлне)

| Районсем тата вăрман хатĕрлекен организацисем | Плана тултарнă (процентпа): Туртарас енĕпе | Хатĕрлес енĕпе | Мĕнле вырăн йышăннă: Туртарас енĕпе | Хатĕрлес енĕпе |
|---|---|---|---|---|
| Шупашкар | 108,3 | 145,1 | 1 | 4 |
| Чкаловски | 107,8 | 81,1 | 2 | 27 |
| Чурачăк | 106,9 | 111,7 | 3 | 13 |
| Шăхасан | 105,2 | 136,2 | 4 | 7 |
| Первомайски | 104,9 | 135,5 | 5 | 8 |
| Куславкка | 104,1 | 115,8 | 6 | 10 |
| Советски | 99,8 | 109,8 | 7 | 15 |
| Елчĕк | 99,3 | 112,8 | 8 | 12 |
| Калинино | 97,4 | 146,2 | 9 | 3 |
| Комсомольски | 96,1 | 108,0 | 10 | 16 |
| Муркаш | 94,5 | 98,2 | 11 | 20 |
| Тăвай | 94,1 | 97,7 | 12 | 21 |
| Красноармейски | 93,5 | 103,8 | 13 | 17 |
| Сĕнтĕр | 85,8 | 73,2 | 14 | 29 |
| Пăрачкав | 85,7 | 113,1 | 15 | 11 |
| Сĕнтĕрвăрри | 84,4 | 131,1 | 16 | 9 |
| Çĕмĕрле | 82,8 | 191,5 | 17 | 1 |
| Вăрнар | 76,8 | 143,6 | 18 | 5 |
| Çĕрпÿ | 74,7 | 94,0 | 19 | 24 |
| Канаш | 73,4 | 96,5 | 20 | 22 |
| Вăрмар | 67,5 | 75,1 | 21 | 28 |
| Ишлей | 66,6 | 140,1 | 22 | 6 |
| Шăмăршă | 65,4 | 182,4 | 23 | 2 |
| Элĕк | 64,7 | 103,2 | 24 | 18 |
| Октябрьски | 60,1 | 84,6 | 25 | 26 |
| Йĕпреç | 58,6 | 96,0 | 26 | 23 |
| Етĕрне | 58,1 | 90,9 | 27 | 25 |
| Хĕрлĕ Чутай | 56,2 | 111,1 | 28 | 14 |
| Улатăр | 47,1 | 68,6 | 29 | 30 |
| Кувакино | 45,4 | 99,4 | 30 | 19 |
| * * * | | | | |
| Кирě вăрман хуçалăхĕ | 109,1 | 117,8 | 1 | 6 |
| Йĕпреç вăрман хуçалăхĕ | 108,8 | 142,8 | 2 | 2 |
| Вăрнар вăрман хуçалăхĕ | 105,3 | 188,1 | 3 | 1 |
| Çĕмĕрле вăрман хуçалăхĕ | 100,2 | 124,7 | 4 | 5 |
| Алтышево вăрман-промхозĕ | 93,7 | 82,5 | 5 | 17 |
| Долгополянăри вăрман заводĕ | 92,0 | 132,5 | 6 | 4 |
| Йĕпреç вăрман участокĕ | 91,4 | 94,2 | 7 | 11 |
| Улатăр вăрман хуçалăхĕ | 91,0 | 133,1 | 8 | 3 |
| Буинск вăрман-промхозĕ | 81,5 | 102,5 | 9 | 8 |
| Вăрнар вăрман-промхозĕ | 77,0 | 104,2 | 10 | 7 |
| Çĕмĕрлери механизациленĕ вăрман пункчĕ | 73,8 | 88,3 | 11 | 13 |
| Канаш вăрман-промхозĕ | 72,7 | 66,4 | 12 | 19 |
| Йĕпреç вăрман-промхозĕ | 70,9 | 89,1 | 13 | 12 |
| Атăл леш енчи вăрманпромхоз | 70,7 | 88,3 | 14 | 14 |
| Кирери механизациленĕ вăрман пункчĕ | 67,0 | 98,2 | 15 | 9 |
| Хĕрлĕ Чутайри механизациленĕ вăрман пункчĕ | 66,4 | 87,7 | 16 | 15 |
| Улатăр вăрман-промхозĕ | 60,5 | 86,1 | 17 | 16 |
| Алтышевăри вăрман заводĕ | 50,5 | 82,5 | 18 | 18 |
| Шăмăршă вăрман-промхозĕ | 48,3 | 95,8 | 19 | 10 |

## *Çуракине большевикла хатĕрленер!*

## Юлса пыракан районсемпе колхозсене вăрлăх парса пулăшаççĕ

ЧУРАЧĂК. Малта пыракан колхозсен пуçарăвне ырласа, Чурачăк районĕнчи колхозсем юлса пыракан районсемпе колхозсене вăрлăх парса пулăшаççĕ. Паянхи кун тĕлне колхозсенчен килнĕ сведенисем тăрăх, районĕпе 500 центнер вăрлăх кивçен пама йышăннă. Вăл шутран 270 центнерне пухса «Заготзерно» склачĕсене леçнĕ. «Прогресс», «Новая сила» колхозсем кашнийех 20-шер центнер, «Совет» колхоз 15 центнер, «Пчелкино» колхоз 12 центнер, «Пучах» колхоз 12 центнер, «Красная Паварня» колхоз 22 центнер леçсе панă.

* * *

СĔНТĔР. Районри колхозсем юлса пыракан районсемпе колхозсене пулăшма вăрлăхлăх тырă хываççĕ. Пурĕ 800 центнер пама йышăннă, вăл шутран 521 центнерне «Заготзерно» складне леçнĕ. Малта пыракан «Комбайн», «Заря» колхозсем кашнийех 30-шар центнер, «Колос» тата «Новый путь» колхозсем 50-шар центнер пама пулнă, çав тырра вĕсем складсене леçсе панă та ĕнтĕ.

ИШЛЕЙ. Районри колхозсем хăйсен фончĕсенчен вăрлăх çитмен колхозсене тырă парса пулăшаççĕ. Паянхи кун тĕлне пурĕ 3000 пăт ытла «Заготзерно» склачĕсене леçнĕ. Уйрăмăнах çак пахча ĕçе Сыпай-касси ял Советне кĕрекен колхозсем организованно туса ирттернĕ. «Ыраш» колхоз —60 пăт, «Клевер» колхоз—90 пăт, «Труд» колхоз—90 пăт, «Вускасы» колхоз—60 пăт, Свердлов ячĕпе тăракан колхоз—60 пăт, «Парижская Коммуна» колхоз — 90 пăт, «Большевик» колхоз—120 пăт, «Правда» колхоз—180 пăт, «Красноармеец» колхоз—120 пăт леçнĕ. Вăрлăх çитмен колхозсене вăрлăх парса пулăшасси районра анлăн сарăлса пырать.

* * *

Районсенчен пĕлтернĕ тăрăх, юлса пыракан районсемпе колхозсене пулăшас майпа вăрлăхлăх тырă хывасси анăçлă пырать. Çĕрпÿ районĕнчи колхозсем пурĕ 800 центнер, Муркаш районĕнчи колхозсем 115 центнер, Красноармейски районри колхозсем 500 центнер пама йышăннă. Çав тырра нумай колхозсем «Заготзерно» склачĕсене леçсе панă та ĕнтĕ.

### *Колхозниксем килти тислĕке хире тăнаççĕ*

ÇĔРПÿ. Кăшаркассинчи «Пионер» колхоз çуракине лайăх хатĕрленет. Вăрлăхсем çителĕклĕ, вĕсене сортласа хунă, шăтас пахалăхне тĕрĕсленĕ. Колхозниксене вĕренме агрокружок организацииленĕ. Кашни колхозник гектартан 100 пăт тырă туса илессишĕн кĕрешĕве хутшăнать. Колхозниксем колхоз хирне хăйсен килĕсенчен 20—30-шар лав тислĕк кăларчĕç.

Уйра тислĕке лайăх купаласа çĕртеççĕ. Колхозниксен килĕнчен халĕ хире пĕтĕмпе 840 лав ытла тислĕк кăларнă. Ку ĕçре вăкăрсемпе анлăн усă кураççĕ. Колхозра пĕтĕмпе 6 вăкăра кÿлсе ĕçлеме вĕрентнĕ, халĕ тата 6 вăкăра вĕрентеççĕ. Кăçал колхоз çуракинче 12 вăкăрпа усă курма шухăшлать.

**А. ИВАНОВ.**

### Вăкăрсемпе ĕçлеме хатĕрленеççĕ

СОВЕТСКОЕ. Туртăм вăйĕ çителĕксĕр çĕрте колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсенче вăкăрсемпе усă курма хатĕрленеççĕ. Тури Ачакри «Крестьянская газета» колхозра 4 вăкăра, Çулавăри «Урожай» тата «Сила» колхозсенче 2-шер вăкăра кÿлме вĕрентрĕç. Халлĕхе вĕсемпе выльăх фермисем патне апат турттараççĕ.

**(Хăмăр информ.).**

### 12 çул конюх ĕçĕнче

Муркаш районĕнчи «Çĕнĕ пурнăç» колхозра З. Данилова юлташ 12-мĕш çул ĕнтĕ конюх пулса ĕçлет. Вăл хăй ĕçне юратса тăвать, ытти конюхсене пахи пример кăтартать. Данилова пăхакан лашасем мăнтăр, пурте кÿлме юрăхлă. Правлени ăна темиçе хутчен те премиленĕ.

**П. АНИСИМОВ.**

### Колхозри çитĕнÿсем председательрен нумай килеççĕ

Канаш районĕнчи Çĕнĕ Ахпÿртри «Красный путиловец» колхоз иртнĕ çулсенче чи кая юлса пыракан колхозсенчен пĕри пулнă. Агротехника мероприятийĕсене пурнăçласа пымаппине пула, тырă та пите начар пулнă. Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене аран-аран кăна тултарса пынă. Колхозра ĕç дисциплини начар пулнă.

Иртнĕ çул колхоз председателĕ пулса ĕçлеме Мухин юлташа суйланă. Вăл, чăн малтанах, колхоз ĕçне ертсе пыраканcем çине ытларах çаврăнса пăхнă. Бригадирсем пулса ĕçлеме ĕçе юратакан, чи лайăх колхозниксене суйласа лартнă. Фермăсен заведующийĕ пулса ĕçлеме колхозри паллă стахановкăна Е. Усанова юлташа хушнă. Колхоз председателĕ Мухин юлташ çак ответлă ĕçри çынсем мĕнле ĕçленине тăтăшах тĕрĕслесе тăнă, вĕсене ĕçре практикăллă пулăшу панă. Колхозра массăллă ăнлантарулла ĕçе лайăх йĕркеленĕ.

1944 çулта çуракине лайăх хатĕрленсе кĕтсе илнине пула, ăна кĕске вăхăтра тата пахалăхлăн ирттернĕ. Тырпулсем лайăх итĕннĕ, вĕсене çумкуракĕсенчен тасатсах тăнă. Çапла колхоз государствăна памалăх та, колхозниксене ĕçкунĕсем çине валеçмелĕх те тырă туса илнĕ.

Государство умĕнчи парăмсене парса татнă тата колхозри кирлĕ фондсене уйăрнă хыççăн ĕçкунĕсем çине 1,5-шер килограмм тырă валеçсе панă.

Колхозри выльăхсем ăшă та çутă витесенче пурăнаççĕ. Выльăх уйри айне яланах улăм сараççĕ тата ăна улăштарсах тăраççĕ. Выльăхсем валли апат çителĕклĕ. Утă, улăм, тымар-çимĕç те нумай. 80 тонна силос пур. Выльăхсене çирĕплетнĕ рационпа çитереççĕ, выльăх апатне типтерлĕ тыткалаççĕ.

Колхоза кăçал 600 центнер вăрлăх кирлĕ. Вăл тырра уйăрнă, халĕ ăна сортлаççĕ, шăтас пахалăхне тĕрĕслеççĕ. Колхозниксем хире тислĕк кăларас тĕлĕшпе те аван ĕçлеççĕ. Юлашки вăхăтра кашни кунах хире 30—40 лав тислĕк кăлараççĕ.

— Кăçал иртнĕ çулхинчен ытларах тырă туса илме пур условисем те çителĕклĕ, тикенерех ĕçлени кăна кирлĕ. — тет колхоз председателĕ Мухин юлташ.

**С. КАШИН.**

## ВЛКСМ райкомне мĕншĕн критиклерĕç

КАЛИНИНО. Çак кунсенче комсомолăн районри IV-мĕш конференцийĕ пулса иртрĕ. Конференцире ВЛКСМ райкомĕн ĕçĕсем çинчен Васильева юлташ доклад туса пачĕ.

Докладчик районри комсомолецсем ялхуçалăх ĕçĕсене мĕнле хутшăнса ĕçлени, фронта, тăван Хĕрлĕ Çара пулăшас тĕлĕшпе комсомолецсем мĕн туни çинчен каласа пачĕ. Отчетлă тапхăрта 11 уйăх хушшинче 268 çамрăка комсомола илнĕ, 38 комсомолец парти ретне кĕме тивĕçлĕ пулнă.

Отчетлă доклад тăрăх прение нумай делегатсем тухса каларĕç. Комсомол райкомĕн ĕçĕнчи нумай çитменлĕхсене палăртса критиклерĕç.

ВЛКСМ райкомĕ комсомолăн пуçламĕш организацийĕсене ĕçре тĕтĕклĕ кăтартусем парса тивĕçлипе ертсе пыман. Ялхуçалăх ĕçĕсене анăçлăн туса ирттерес, вăйлă тырпул туса илме комсомолецсемпе çамрăксен звенисене тăвас тĕлĕшпе пачах çителĕксĕр ĕçленĕ. «Красноармеец» колхозри лайăх ĕçлекен звенон ĕç опычĕсене ытти колхозсене сарас тĕлĕшпе нимĕн те туман.

Ялти çамрăксен каçхи шкулĕсем çинчен нумай калаçнă. Анчах ВЛКСМ райкомĕ çамрăксен каçхи шкулĕсенче миçе çамрăк вĕреннине тата вĕренме миçе çын çÿремеллине пĕлмест. Хăшпĕр шкулсем комсомол райкомĕ куçĕ умĕнчех ĕçлеме пăрахаççĕ. Пуçламĕш организацисене ертсе пырас ĕçре райком нумай чухне постановленисем йышăннипех лăплансă тăрат. Йышăннă постановленисене пурнăçламĕш организацисене çитерни тата вĕсене пурнăçлассишĕн çине тăрса кĕрешни çук.

Комсомол организацийĕсен секретарĕсемпе тата пионер вожатийĕсемпе семинарсем, канашлусем ирттермен, вĕсене ĕçре пулăшса пыман. Çавна пула Эльменти, Карачурари, Уйкас Юнтапари тата Хăмăшри организацисем саланса каяс патнех çитнĕ. Отчетлă тапхăрта вăл организацисенче пĕр çамрăка та комсомол ретне явăçтарман. Нумай шкулсенчи пионер организацийĕсем пачах ĕçлемеççĕ.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XII-мĕш пленумĕ комсомолăн шкулсенчи ĕçĕ çинчен йышăннă постановление пурнăçлас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Шкул ачисем хушшинчи политикăллă воспитани ĕçне юхăнтарса янă, çавна пула шкулсенчи комсомол организацийĕсем питĕ хуллен ÿсеççĕ. Хăшпĕр шкулсенче комсомол организацийĕсем çук. ВЛКСМ райкомĕ çамрăксем комсомола илме ыйтса панă заявленисене темиçешер уйăх хушши пăхса тухмасăр тытса тăрать.

Колхоз çамрăкĕсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе çителĕксĕр туса пыраççĕ. ВЛКСМ райкомĕ агитаторсен ĕçне ертсе пымасть, вĕсене пулăшмасть. Комсомол райкомĕнче ĕçлекен юлташсем докладсем сахал тăваççĕ, политика ыйтăвĕсемпе калаçусем ирттермеççĕ. ВЛКСМ райкомĕн ĕçлекенĕсем ĕçленине мест. Нумай вулав çурчĕсенче комсомолецсем ĕçлеççĕ, анчах комсомол райкомĕ вĕсене пулăшмасть. Çапла вара нумай вулав çурчĕсем, район центрĕнчи культура çуртĕ çумĕнчи художествăллă пултарулăх кружокĕсем ĕçлемеççĕ, çамрăксен каçĕсем пулмаççĕ.

Конференци çак çитменлĕхсем пĕтĕмпех ВЛКСМ райкомĕ комсомол активĕпе начар ĕçленĕрен, вĕсене комсомол ĕçне çителĕксĕр хутшăнтарнăран пулнине палăртрĕ. Хурăн Кăкшăмри пуçламĕш организацин секретарĕ Семенов юлташ ВЛКСМ райкомĕн штатра таман инструкторĕ пулнă, анчах комсомол райкоме ăна çулталăк хушшинче те пĕр ĕç хушман.

ВЛКСМ райкомĕн бюровĕ ответлăха туйса ĕçлемен. Çитменлĕхсене кăтартса пани, пĕр-пĕрне пулăшни, ĕçе юсама тăрăшни пулман. Бюро членĕсем Егоровăпа Флегентова юлташсем ялан ĕçлекен комиссисен председателĕсем пулнă. Анчах вĕсем хăйсене ертсе пыма хушнă комисси членĕсене пĕрре те пухса калаçман, унта камсем тăнине те пĕлмеççĕ.

Конференцире тухса калакансем ВЛКСМ райкомĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене тивĕçлипе критиклерĕç. çитменлĕхсене пĕтермелли майсене кăтартса пачĕç. Отчетлă доклада тĕплĕн сÿтсе-явнă хыççăн, конференци ВЛКСМ райкомĕн ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене палăртса, анлă решени йышăнса хăварчĕ. Комсомол райкомĕн çĕнĕ составне суйларĕ.

Конференцире ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн шкулсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ Токарев юлташ пулчĕ.

## Парти пурнăçĕ

## Парти шкулĕнче

Октябрьскинчи парти шкулне иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнче организациленĕ. Ун хыççăнах шкулăн ĕç планне тата вĕренме çÿрекенсен списокне çирĕплетнĕ. Вĕренекенсем халĕ хăйсен идейăпа политика пĕлĕвне ÿстерессишĕн, марксизм-ленинизм теорине алла илессишĕн пĕтĕм пултарулăхне хураççĕ. Кашни вĕренекен шкула пĕр сиктермесĕр çÿрет.

Шкулта пурĕ 31 çын вĕренет. Вĕсенчен нумайĕшĕсем, занятисене тĕплĕн хатĕрленсе, руководитель сĕннĕ материалсене вуласа пыраççĕ. Занятисем вăхăтра, лайăх ирттеççĕ. Парти кабинечĕ вĕренекенсене çителĕклĕ таран литература тупса парать. Ку тарихчен пурĕ 28 заняти ирттернĕ. 104 сехет вĕреннĕ. Занятисем пуçланас умĕн яланах 15—20 минут хушши тент ери лару-тăру çинчен, Совинформбюро пĕлтерĕвĕсем çинчен каласа параççĕ.

Преподавательсем сăмахпа çеç мар, карттăсемпе тата таблицăсемпе усă курса вĕрентеççĕ. Вĕренекенсенчен нумайĕшĕсем кĕнекепе харпăрхăй тĕплĕн ĕçлеçĕ.

«ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренес ĕçе парткабинет заведующийĕ Г. Мурзаев юлташ ертсе пырать. Вăл занятисене ирттерме лайăх хатĕрленет, ăнланман ыйтусене çийĕнчех ăнлантарса парать. Халĕ «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн» саккăрмĕш сыпăкне вĕренеççĕ. Занятисене хатĕрленнĕ чухне нумайĕшĕ Сталин юлташăн «Вопросы ленинизма» ятлă кĕнекипе усă кураççĕ. Уйрăмах лайăх вĕренекенсен шутне А. Лукинов, С. Рябин, А. Осипов, М. Семенова тата А. Полников юлташсене кĕртме пулать. Вĕсем занятисене пĕр сиктермесĕр, хатĕр конспектсемпе пыраççĕ.

Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнеки тăрăх занятисене вăтам шкул директорĕ К. Вишневский юлташ ирттерет. Вăл вĕренекенсене совет халăхĕн вăрçă çулĕсенчи кĕрешĕвĕпе çĕнтерĕвĕсем çинчен тĕплĕн ăнлантарса парать. Руководитель занятисене лайăх хатĕрленни тата çăмăл чĕлхепе каланипе вĕренекенсене материала тĕплĕн ăнланма пулăшать.

Шкул руководителĕ И. Чирков юлташ (ВКП(б) райкомĕн секретарĕ) занятисем мĕнле иртнине яланах сăнаса тăрать. Хăшпĕр чухне çитменлĕхсене палăртса, вĕсене тÿрлетме пулăшать. Юлашкинчен заняти руководителĕ кам мĕнле ответсем панине, çитес занятисене мĕнле хатĕрленсе килмеллине пĕлтерет.

Парти шкулне çÿрекенсем валли лайăх вĕренме пур майсем те туса панă. Занятисем пулакан пÿлĕмре çителĕклĕ таран сĕтел-пуканcем тата çутă пур. Унтах халь килнĕ хаçат-журналсене те курма пулать. Шкула çÿрекенсене тĕрĕс хисепе илеççĕ. Ку тĕлĕшпе пропагандăпа агитаци отделĕ ятарласа журнал тунă. Журнал çине шкула кам мĕнле çÿренине, мĕнле темăсемпе занятисем ирттернине çырса пыраççĕ. Занятине сăлтавсăрах пымасан е хатĕрленмесĕр пырсан, ун çинчен çийĕнчех асăрхаттараççĕ. Çапла туни ĕçĕн пахалăхне чылаях аванлатрĕ. Парти шкулĕ кадрсен пĕлĕвне аслăлатас ĕçе хавхалантаракан пулса тăчĕ.

**Н. АНДРЕЕВ,**
**(«Чăваш Коммуни» корр.).**

### МУСКАВРА ÇĔНĔ ТЕАТР ТĂВАÇÇĔ

Мускавра Сталински районри Журавлев площадĕнче театр тăвас ĕçе çĕнĕрен тытăннă. Театрта 1.100 вырăн пулмалла. Театрта çаврăнакан сцена, кучухнехи театр механизмĕ, çутатмалли çĕнĕ аппаратура тата кăнтăрлахи пек çутă паракан лампăсем пулмалла.

Театра кăçалхи çул пĕтнĕ çĕре туса çитермелле. (ТАСС).

## Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, мартăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре каланă тăрăх, Эльзас тÿремĕнче, Хагенау вăрманĕнчен çурçĕрте рехре. союзниксем чылай малалла куçнă. Тăшман кунта хăвăрт каялла чакса пырать пулас. Союзниксен чаçĕсем çулйĕрсен паха центрĕ пулса тăракан Зульц патне çитнĕ. Унтан çурçĕртерехре американецсен 3-мĕш армийĕ, 11 километр малалла куçса, Наэ тата Рейн шывĕсем пĕрлешнĕ çĕрте ларакан Бинген хулине кĕрсе кайнă. Вăл индустриллĕ пысăк хуларан — Майнц хулинчен 22,5 километр хĕвеланăçнерехре ларать. Саарбрюккенпа Гардт тăвĕсем хушшинче союзниксем малалла куçса пыраççи партак вăрахланнă, мĕншĕн тесен нимĕçсем Зигфрид линийĕн тулашри укреплениĕсен че вăйлăн хирĕç тăрса çапăçаççĕ. Çавах та Гардт тăвĕсем çинче союзниксем 13 километра çити малалла куçнă.

Рейн шывĕн хĕвелтухăç хĕрринче. союзниксен Ремаген сывăхĕнчи укреплени районĕнче (çав укрепленин лаптăкĕ халь 300 тăваткăл километр ытла шутланать) тăшман артиллерирен вăйлăн персе тăрать. Союзниксем çавах та хĕвелтухăçнелле, Брунсбергран çурçĕртерехри çÿллĕ вырăн патнелле куçса пыраççĕ. Мартăн 17-мĕшĕнче союзниксем 5.146 çынна тыткăна илнĕ.

ЛОНДОН. мартăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс тавраш ĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре каланă тăрăх. Италире. 5-мĕшпе 8-мĕш армисен участокĕсенче. патрульсем активлăн шыраса çÿренĕ.

### АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, мартăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 19-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Германие тапăннă. Бомбăсене пуринчен ытла çулйĕрсен центрĕсем çине — Бохум хулинчен 6 миля кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре ларакан Виттен çине. Бохум çине тата Франкфуртран темиçе миля хĕвелтухăçнерехре ларакан Ханау çине пăрахнă.

### Тыткăна лекнĕ совет çыннисенчен мăшкăлланăшăн тата вĕсене вĕлернĕшĕн айăплă çынсене Финлянди сучĕсем хÿтĕлесе тăраççĕ

ХЕЛЬСИНКИ, мартăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Перемири çинчен тунă Килĕшĕвĕн 13-мĕш статьи тăрăх, Финлянди «çар преступленийĕсемшĕн айăпланакан çынсене тытас тата вĕсене суд тĕвас тĕлĕшпе союзлă державăсемпе пĕрлешсе ĕçлеме пулнă». Финлянди правительстви çар преступникĕсем тунă ĕçсене тĕпчесе тухма уйрăм комитет тунă. Финлянди влаçĕсем вĕсене тĕпчеме тытăннă. Союзниксен Контроль Комиссийĕ кăтартса панă çынсене арестленĕ. Хальхи вăхăт тĕлне Финляндин тĕп штабĕн хирти сучĕсем чылай приговорсем йышăннă. Сăмахран, тĕп штабăн хирти сучĕ тыткăна лекнĕ 4 совет çыннине вĕлернĕшĕн Вейне Герман Укконена, тыткăна лекнĕ совет çыннисене тискеррĕн асаплантарнăшăн тата вĕлернĕшĕн Исулуко Вильхе Нуортимона, тыткăна лекнĕ 4 совет çыннине вĕлернĕшĕн Ильмар Харьюзана, тыткăна лекнĕ 3 совет çыннине вĕлернĕшĕн Матти Ионас Антилана ĕмĕрлĕхе каторгăна ямалла тунă тата вĕсенчен граждан прависене ĕмĕрлĕхе тытса илмелле тунă. Асăннă преступленисемшĕн Рудольф Хейнонена 12 çул та 6 уйăхлăха, айăпланакан Бакмана 12 çуллăха, Розенберг Кости Аксельине 10 çуллăха каторгăна ямалла тунă.

Калас пулать, тыткăна лекнĕ совет çыннисен лагерĕсенче тунă преступленисене тĕпчессине Финлянди влаçĕсем çиелтен кăна тăваççĕ, законăн тивĕçлĕ статьине кирлĕ пек пăхăнмаççĕ, çар преступникĕсен ĕçĕсене пăхса тухакан хирти çар сучĕсем пит çăмăл приговорсем йышăнаççĕ. Нумай ĕçсем тăрăх следстви халĕ те пĕтмен. Сăмахран, Юстимо местечки çывăхĕнче тыткăна лекнĕ 10 совет çыннине персе пăрахнине, тыткăна лекнĕ çар çыннисене 5-мĕш лагерьте йышлăн персе пăрахнине халĕ те тĕпчесе тухман тата ыттисем те.

Хирти судсем çар преступникĕсене ытла çăмăл наказани панине юрăхлă ĕç тесе шутлама çук. Тыткăна лекнĕ Бертеев офицера хĕнесе вĕлернĕшĕн суда панă çынсене пурне те хăтарнă, мĕншĕн тесен Берлеева хĕнекен Виртанен салтак хăйне хăй персе пăрахнă, тенĕ. Симанайнен салтак тыткăна лекнĕ Шатровко тата Ракчовский ятлă çынсене вĕлернĕ пулнă. Хирти çар сучĕ Симанайнена айăпласшăн пулман, мĕншĕн тесен «Симанайнен ун чухнехи обстановка хушнинчен ытларах йĕркесĕрлĕх туни çинчен калакан даннăйсем çителĕклĕ мар» иккен. Пострадавшăран Седерлунд салтак, лагерь зони ăшĕнче тăнă çынсем çине персе, Гончарова, Шапошникова, Стефенцева тата Рака амантнă/пулнă (Рака çуран йывăр амантнă пулнă). Хирти çар сучĕ Седерлунда «тыткăна лекнĕ çар çыннисене хĕнесе хĕрлĕнĕшĕн тата тыткăна лекнĕ çынна йывăр амантнăшăн» пĕр çул та 6 уйăхлăха çеç каторгăна ямалла тунă. Камула салтак тыткăна лекнĕ çар çыннине лагерь начальникĕ Линансало хушнипе вĕлернĕ имĕш. Анчах та хирти çар сучĕ Камулана наказани парассинчен хăтарнă, мĕншĕн тесен вăл «персе парахма калакан приказа пурнăçа кĕртни закона хирĕç пыракан ĕç пулнине ăнланайман» иккен. Çав çынна вĕлернĕшĕн Линансалона та нимĕнле наказани те паман. Линансало тыткăна лекнĕ çынсене хăй те йывăр наказанисем панине тата хĕйне пăхăнса тăракан çынсене те çаван пек тивĕçсĕр наказани пама ирĕк панине суд пĕлнĕ. Анчах «служба обязанноçĕсене яланах юри пăхăнмасăр» пурăннăшăн Линансалона 7 уйăхлăха тĕрмене хупма йышăннă, ĕçе çавăнпа пĕтерсе лартнă вара.

Тыткăна лекнĕ çар çыннисене хĕнекенсене «служба обязанноçĕсене пăхăнмасăр» тăнăшăн пĕр кунхи е икĕ кунхи ĕç укçи чухлĕ штраф тÿлеттермелле тунипех ĕç ирте-ирте кайнă. Хăшпĕр чухне суд айăплă çынна законсăрах тÿрре кăларма тăрăшни палăрать. Тыткăна лекнĕ çар çыннисене хĕнесе вĕсенчен пĕрине вĕлернĕшĕн Хейконен салтак пирки суд çапла каланă: «Çак ĕç тыткăна лекнĕ çар çынни хăй кутăн çын пулнă пирки, лагерьти ĕç задани йĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе питĕ япăх ĕçлекенскер пулнă пирки тата тыткăна лекнĕ çынсенчен тахăшĕ хурал тăракан салтаксен çăне вăрланă пирки пулнă», тенĕ.

Хăшпĕр преступниксене вĕсен пĕтĕм преступленийĕ ĕçĕсемшĕн мар, уйрăм преступленийĕсемшĕн çеç айăпланă, çак преступленисем çинчен те пулин вĕсенчен нимĕн те юлмалла мар туса çырса хунă. 29 приговортан 15-шĕ пирки Финляндин государство обвинителĕсем суд приговорĕсем пирки хăйсем жалобăсем панă. Çар преступленийĕсем пирки тунă комитет çав йĕркесĕрлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе нимĕнле мерăсем те йышăнман. Союзниксен Контроль Комиссийĕ Финлянди Правительствине çаксем çинчен пĕлтерсен, асăннă комитета пĕтерсе хунă та унăн ĕçĕсене юстици министерстви аллине панă.

Калас пулать, арестленисем чылай шутланаççĕ пулин те, сержантсемпе рядовойсен ытти çынсем хушнипе тунă пĕчĕк преступленийĕсене çеç тĕпчеççĕ. Çак япала ĕнтĕ тыткăна лекнĕ совет çар çыннисен лагерĕсенче тискеррĕн хĕнесе вĕлернисемшĕн айăплă пулса тăракан пысăк çынсене ответ тыттарассинчен хăтарса хăварнине çеç пĕлтерет.

### ПОЛЬШАРИ ÇĔР РЕФОРМИ

ВАРШАВА, мартăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăн çĕнĕрен ирĕке кăларнă çĕрĕсем çинче çĕр реформи туса ирттерес ĕç анлăн сарăлнă. Краков воеводствинче валеçсе памалли 381 имениерен 129 имение хресченсем хушшинче валеçнĕ ĕнтĕ. Валеçнĕ çĕрĕн лаптăкĕ 14.000 гектар шутланать. Кельцы воеводствинче 200.000 гектар çĕр йышăнакан 900 имение валеçмелле.

Çураки ĕçĕсем пуçланиччен ытти воеводствăсенче те пысăк ĕçсем туса ирттермелле. Варшава, Лодзь, Краков, Поморски, Кельцы, Познань, Белосток, Силези воеводствисенче çĕр реформи туса ирттерес тĕлĕшпе 2.500 землемерпа агронома яхăн ĕçлеççĕ.

### ВЕНГРИРЕ ÇĔР РЕФОРМИ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ЗАКОНА ЙЫШĂННИ

ДЕБРЕЦЕН, мартăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Мартăн 17-мĕшĕнче Венгрин вăхăтлăх правительстви çĕр реформи çинчен калакан закона йышăннă. Министрсен советĕн çак ыйту пирки пухăннă черетсĕр ларăвне усăлă чухне премьер-министр Миклош Бела çак ĕç çĕршыв пурнăçĕнче историллĕ вырăн йышăнса тăни çинчен каланă. Çакăн хыççăн çĕрĕç министрĕ Надь Имре министрсен советне çĕрĕç министерстви хатĕрленĕ проекта. Венгрин никама пăхăнманлăх фронтне кĕрекен политикăллă пур партисем те ырланăскерне, сĕннĕ. Вăл проект шутăра çĕр хуçисен çĕрне туртса илсе, çахал çĕрлĕ тата çĕрсĕр тăрса юлнă çынсене çĕр валеçсе парасси çинчен калать.

### ГЕРМАНИРЕ САЛТАКСЕМПЕ ОФИЦЕРСЕНЕ ВĔЛЕРНИ

ЛОНДОН, мартăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Германири радио калани çине кăтартса, Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: куçса çÿрекен хирти çар сучĕсен приговорĕсем тăрăх Германи çарĕнчи темиçе пин салтакпа офицера вĕлернĕ. Германирен пĕлтернĕ тăрăх, çавăн пек судсене çĕршыври пысăк центрсенче дезертирсен ĕçне тата çар дисциплинине ытти майсемпе пăсакан çынсен ĕçĕсене пăхса тухма тунă.

### РЕЙТЕР АГЕНТСТВИ КОХ ГАУЛЕЙТЕРА ВĔЛЕРНИ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, мартăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Цюрихран çапла пĕлтерет: лайăх пĕлсе тăракан çынсем каланă тăрăх, Хĕвелтухăç Пруссин гаулейтерне Эрих Коха, çартан тарнă тесе айăпласа вĕлермелле тунă. Тăватă эрне каярах Кенигсбергран вăрттăн тухса тарма хăтланнă хыççăн ăна çакса вĕлернĕ.

### АМЕРИКА БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ ЯПОНИЕ ТАПАННИ

ВАШИНГТОН, мартăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Лăпкă океанри флочĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх. мартăн 18-мĕшĕнче американецсен авианосецсем çинчи самолечĕсем Японири Кюсю утравĕ çинчи авиабазăсемпе сооружени-сене тапăннă.

ВАШИНГТОН, мартăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). США-н çар министерстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 18-мĕшĕнче «Вĕçекен крепость» йышши хăватлăран хăватлă бомбардировщиксем Нагоя хулинчи (Японни) промышленность объекчĕсене тапăннă.

### БЕЛЬГИ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ЯТАРЛАСА ПАНА ПОЛНОМОЧИСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Брюссельри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Бельги сеначĕ ĕнер правительствăна ятарласа памалли полномочисем çинчен калакан законопроекта ырланă. Депутатсен палати вăл законопроекта малтанах йышăннă. Вăл законопроект тăрăх, Бельги правительстви спекуляцие хирĕç чрезвычайнăй законсем кăларма, апат-çимĕç, топливо, финанс, транспорт тата юстици ыйтăвĕсем тăрăх чрезвычайнăй законсем кăларма анлă полномочисем панă.

### КĔСКЕН

▲ Норвеги патриочĕсем Осло хулинче чугун çулăн тĕп управленийĕн çуртне сирпĕтерсе янă.

▲ Мексикăпа США-н çар представителĕсен конференцийĕ уçăлнă. Вăл конференцире Мексикăпа США вăрçă ĕçĕнче пĕрлешсе ĕçлессин ыйтăвĕсене сÿтсе-явмалла.

▲ Стокгольм хулипе Берлин хушшинчи телефон çыхăнăвĕ татăлнă. Хальхи вăхăтра çав хуласем хушшинчи телефон çыхăнăвĕ Гамбург хули урлă пырать.

▲ Парижри трибунал Швейцер адвоката вĕлермелли приговор йышăннă. Вăл Гитлер посолĕн Абецăн тусĕ пулнă. Çавăн пекех Швейцер «Европăри çамрăксен союзĕн» руководителĕ пулнă. Вăл организаци членĕсем Францири эсэсовецсем пулнă.

(ТАСС).

### ХРОНИКА

СССР Верховный Совет Президиумĕ Михаил Григорьевич Сергеев юлташа Совет Союзĕн Бельгири Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ пулма уйăрса лартнă.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редактора — 0—67, заместителен — 0—23, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 3—31, издательство конторин 2—85.

НТ 00295 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000